4067 Ч-27



МАКСИМ ЯСТРАН

# ÇĔНТЕРӲ ЯЛАВĔ

ЧĂВАШГОСИЗДАТ — 1941

МАКСИМ ЯСТРАН

# ÇĔНТЕРӲ ЯЛАВĔ

САВĂСЕМ

ЧУВАШСКАЯ
КНИЖНАЯ ПАЛАТА
г. Чебоксары Чувашской АССР

ЧĂВАШ АССР ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ
ШУПАШКАР 1941

## ÇĔНТЕРУ ЯЛАВĔ

Тав тăватпăр эпир ирĕк çĕршыва,
Çӳлĕрен çӳле çĕклетпĕр ун чапне;
Çӳлĕрен çӳле çĕклет пирĕн хăват
Маркс—Энгельс—Ленин—Сталин ялавне!

Çĕнĕ пурнăç çапăçмашкăн йыхăрать,
Çĕнĕ пурнăç кĕрешӳ вутне чĕнет.
Ахаль мар эпир çĕклетпĕр алăра
Маркс—Энгельс—Ленин—Сталин ялавне!

Эпир вăйлă—хурçă хумлă тинĕс пек,
Пирĕн ӳсĕм тăвăл евĕр çĕкленет.
Çӳлерех çĕклер чи ырă тивĕçпе
Маркс—Энгельс—Ленин—Сталин ялавне!

Пирĕн пурнăç çут маяк пек илĕртет,
Пирĕн ӳсĕм тĕлĕнтерчĕ тĕнчене.
Çӳлерех çĕклер-ха чаплă ĕмĕрте
Маркс—Энгельс—Ленин—Сталин ялавне!

Çăлтăр евĕр çуталаççĕ ĕмĕтсем,
Кашниех халь çитрĕ хăйĕн ĕмĕтне.
Ахаль мар çĕклеççĕ пирĕн алăсем
Маркс—Энгельс—Ленин—Сталин ялавне!

Çапăçма, çĕнме чĕнеççĕ çак ятсем,
Çутатаç вĕсем этемлĕх шанчăкне.
Çӳлерех çĕклер-ха, тантăш-тăвансем,
Маркс—Энгельс—Ленин—Сталин ялавне!

## СТАЛИН—АСЛĂ КОМАНДИР

Çĕршывшăн, тĕнчешĕн паллă:
Кăварлă хĕрӳ кунсенче
Çулпуç-командир аслă Сталин
Çĕнтерчĕ мĕнпур фронтсенче.

Çĕршывăм çине йытă-Врангель
Тăссассăн саралнă шăлне,
Тутанчĕ сив хурçă,—тек ан кил!—
Ан сĕкĕн тек халăх килне.

Деникин тискеррĕн, хаяррăн,
Килсессĕн çĕлен пек шуса,
Çĕлен ушкăнне аслă Сталин
Çунтарчĕ те—вĕçрĕ тусан.

Хура шакал йышĕ пек урнăн
Çитсессĕн Колчак çарĕсем,
Аркатрăмăр эпĕр сатуррăн
Çав кашкăр йышне çĕмĕрсе.

Чĕр юншăн йӳтенĕ Юденич
Килсен хĕрлĕ Питĕр çине—
Татах аслă халăх тӳнтерчĕ,
Тĕп турĕ тăшман ушкăнне.

Ак халь çынçиен йытă—Гитлер
Ултавлă пуçларĕ вăрçа...
Ылханлă фашизма хирĕç
Кар тухрĕ вăрça Хĕрлĕ Çар.

Çĕршывшăн, тĕнчешĕн паллă:
Кăварлă умри кунсенче
Çулпуç-командир Аслă Сталин
Çĕнтерĕ мĕнпур фронтсенче!

---

## КАР ÇĔКЛЕН, ХАЛĂХ!

*(В. И. Лебедев-Кумачран)*

„Ыран вăрçă тухсан",—юрласаччĕ ĕнер,
Ак çĕкленчĕ паян вăрçă вучĕ.
Тăшманпа çапăçма паттăрла çĕкленер—
Çĕн вăйпа халăх çĕн юрă хучĕ.

Çĕр çинче, сывлăшра, тинĕсре те
Пирĕн кĕвĕ хăватлă, хаяр:
— Халăх, эс кар çĕклен,
Похода хатĕрлен,
Тăшмана тĕппипех аркатар!

Вăрçă вучĕ тухсан,—кар тапранчĕ çĕршыв
Кронштадтран Владивосток таран.
Кар тапранчĕ çĕршыв—аслă, вăйлă çĕршыв,—
Тăшмана аркатмашкăн хаяррăн.

Çĕр çинче, сывлăшра, тинĕсре те
Пирĕн кĕвĕ хăватлă, хаяр:
— Халăх, эс кар çĕклен,
Похода хатĕрлен,
Тăшмана тĕппипех аркатар!

Ыткăнать самолет, хĕм сапать пулемет,
Вăйлă танк полкисем харсăрланчĕç.
Ав, пехота та кар похода çĕкленет,
Тăвăл евĕр тачанкăсем кайрĕç.

Çĕр çинче, сывлăшра, тинĕсре те
Пирĕн кĕвĕ хăватлă, хаяр:
— Халăх, эс кар çĕклен,
Похода хатĕрлен,
Тăшмана тĕппипех аркатар!

Фашистла ордаран сыхланатпăр эпир, —
Çапăçмашкăн эпир тăнă хатĕр, —
Хăйĕн çĕрĕ çинчех тăшмана тĕппипех
Пирĕн вăй çĕнтерӳллĕн аркатĕ.

Çĕр çинче, сывлăшра, тинĕсре те
Пирĕн кĕвĕ хăватлă, хаяр:
— Халăх, эс кар çĕклен,
Похода хатĕрлен,
Тăшмана тĕппипех аркатар!

Халăх, эс кар çĕклен, похода хатĕрлен!
Барабан вăйлăрах янăратăр!
Музыкантсем, мала! Юрăçсем, малалла!
Çĕнтерӳ юррине шăрантарăр!

Çĕр çинче, сывлăшра, тинĕсре те
Пирĕн кĕвĕ хăватлă, хаяр:
— Халăх, эс кар çĕклен,
Похода хатĕрлен,
Тăшмана тĕппипех аркатар!

Пирĕн пек аслă вăй тупас çук тĕнчипе,
Çĕршыв пирĕн мĕльюн-мĕльюн йышлă.
Сталинпа Тимошенко ялан пирĕнпе,
Пирĕнпех паттăр Клим Ворошилов.

Çĕр çинче, сывлăшра, тинĕсре те
Пирĕн кĕвĕ хăватлă, хаяр:
— Халăх, эс кар çĕклен,
Похода хатĕрлен,
Тăшмана тĕппипех аркатар!

---

## ТИМОШЕНКО ÇИНЧЕН ХУНĂ ЮРĂ

Кĕренленчĕ шурă пĕлĕт,
Ярăмланчĕ çутă ир...
Урнă йытсемпе вăрçмашкăн
Кар çĕклентĕмĕр эпир.

Урхамах-утсем çунатлă,
Чĕресемĕр — шĕл-кăвар.
Аслă Сталиншăн, çĕршывшăн
Арăслан пек çапăçар!

Çĕнтерме кăна вĕреннĕ
Вăрçă хирĕнче эпир.
Ертсе кайрĕ Тимошенко —
Савнă маршал, командир.

Маршал хĕçĕнчен хĕлхем те
Вутлă çиçĕм сирпĕнет;
Утă çулнă пек çулать вăл
Урса кайнă йытсене.

Неман тăрăх, Днестр урлă
Чап саланчĕ ун çинчен.
Фашистсем те, шюцкорсем те
Чĕтĕрес ун хĕçĕнчен.

Çапăçса эпир чап илнĕ,
Чапа тухăпăр татах.
Ертсе кайрĕ Тимошенко
Çĕнтерÿллĕ похода.

# КОМСОМОЛ ЮРРИ

„...Уходили комсомольцы
На гражданскую войну..."
*М. Исаковский.*

Пĕр хут мар пире тискеррĕн
Тапăнса пăхнă тăшман...
Нихăçан та çĕршыв пирĕн
Тăшмансен кулли пулман.

Хĕрлĕ çăлтăрлă çĕршывшăн,
Сыхлама ун тивĕçне—
Комсомолецсем хастаррăн
Кайнă граждан вăрçине.

Ирĕк, тулăх Украинăн
Пурлăхне çăтас тесе,
Пĕр хут мар килнĕ хаяррăн
Юншăн сăхă çăхансем.

Хĕрлĕ çăлтăрлă çĕршывшăн,
Çĕклеме ун тивĕçне—
Комсомолецсем хастаррăн
Кĕчĕç граждан вăрçине.

Çулăмпа хĕрелнĕ пĕлĕт,
Çĕр шĕвелнĕ юнпала,—
Пурпĕр чап илнĕ Триполье,
Йăтнă вăл хăмач ялав!

Чапа тухрĕ Совет çарĕ
Ленин-Сталин ячĕпе.
Совет халăхĕ аркатĕ
Нимĕçсен çарне тĕппех!

Ак каллех тискер фашизм
Ăмсанать тăван çĕре...
Ирсĕр йытă-çăхансемшĕн
Вилĕм çитĕ пур-пĕрех!

Ленин-Сталин парнеленĕ
Хĕрлĕ çăлтăр хĕмĕпе—
Совет халăхĕ çунтарĕ
Фашистсене пуçĕпех!

---

## ÇĔНТЕРӰ ЮРРИ

Ăшă юн лӳхме фашизм
Хапсăнать урса кайсах:
Украинăн тырпулне те
Тулăх нефтьлĕ Кавказа.
Тулă унăн пырне ларĕ,
Нефть çунтарĕ хырăмне.
Хĕрнĕ хурçă урăлтарĕ
Урнă Гитлер бандине.

Фашистсен çарне аркатĕç,
Тусан тăвĕç çĕмĕрсе—
Тимошенко тупписем те
Ворошилов учĕсем.

Хĕрлĕ çăлтăра сиресшĕн
Йытă-Гитлер çĕр çинчен.
Хурлăх, выçлăх çӳретесшĕн
Вĕсем пирĕн ялсенче.
Анчах пирĕн Хĕрлĕ çăлтăр
Хăйĕн вутлă хĕмĕпе
Фашистсен çарне çунтарĕ,
Шăлса ывăтĕ кĕл пек.

Тĕнчипех мухтавлăх илĕç
Тăшмана йăлт çĕмĕрсе—
Тимошенко тупписем те
Ворошилов учĕсем.

# НИМĔҪ ĔҪХАЛĂХНЕ

Пĕтĕм тĕнчипелех
Асать халь вутлă вăрçă,
Ăна пуçларĕç
Урнă фашистсем.
Миçе çынна
Вĕсем хăварчĕç выçă,
Миçе çынна
Вĕлерчĕçĕ вĕсем?!

Миçе çынна
Сăхса вĕлерчĕ пуля?
Миçе сăпка çинче-ши
Çурăлчĕ снаряд?...
Яланлăхах
Чи ирсĕр ят пулса вăл юлĕ—
Пуриншĕн те ылханлă—
„Гитлер" ят.

Историре
Пулман ун евĕр варвăр.
Кашни çын ылханать
Фашист-йытăсене.

Вĕсем мĕльюнсене
Хăварчĕç пĕр юр-варсăр,
Вутпа çунтарчĕç
Тулăх çĕрсене.

Голландине таптарĕç—
Юлчĕ çĕмрĕк.
Норвеги вăрманне
Аркатрĕç тупăпа.
Бельги ĕнийĕсен сĕтне
Çĕлен пек ĕмрĕç,
Франци çĕрне
Чикесшĕн пулчĕç тупăка.

Юн ĕмнипе
Шыçса кӳпченĕ Гитлер
Халь тапăнчĕ
Союзăмăр çине.
Çитет!
Çав урнă йытă пĕттĕр!
Тĕнче ан тӳстĕр
Унăн шăршине!

Аманнă нимĕç халăхĕ,
Куратпăр,
Сана фашизм чикрĕ çак вăрçа.
Халăхпа мар,
Эпир фашизмпа вăрçатпăр,
Халăха мар,
Фашизма пĕтерĕ Хĕрлĕ Çар.
Нимĕç ĕçхалăхĕ,
Эсир мĕншĕн вăрçатăр?

Сире мĕн пачĕ Гитлер, урнăскер?
Мĕн тивĕçпе
Эсир пăшал тытатăр?
Хăвăр валли
Шыратăр-ха мĕскер?

Тапран, нимĕç рабочийĕ, хресченĕ!
Сан чĕрере
Хĕвеллĕ ĕмĕт пур.
Фашизма хирĕç
Кĕçех Эльзас çĕкленĕ,
Ирĕклĕхшĕн çĕкленĕç
Лотаринги, Рур...

Берлин çинчен
Фашизм свастики йăванĕ,
Телей хĕвелĕ тухĕ,
Çуталĕ ун çинче.
Пур халăхсем
Çĕкленĕç пĕр тăванăн,
Чыслăх хĕвелĕпе
Çуталĕ пур тĕнче.

—

## ПИРĔН АТТЕН ÇИЧ ЫВĂЛ...

*(Халăх юрри тăрăх)*

Пирĕн аттен çич ывăл,
Çиччĕшĕ те пит хастар:
Нихçан шывра путас çук,
Нихçан вутра çунас çук.

Пирĕн аннен çичĕ хĕр,
Çиччĕшĕ те пит хастар:
Нихçан ята ярас çук,
Нихçан намăс курас çук.

Пирĕн аттен çич ывăл,
Çиччĕшин—çичшер çунат.
Кашни çунат çиййĕнчех
Хĕрлĕ çăлтăр ялтăрать.

Пирĕн аннен çичĕ хĕр,
Çиччĕшин—çич парашют.
Çӳл тӳпене çĕкленсен—
Сехри хăпать çĕленсен.



ЧУВАШСКАЯ
КНИЖНАЯ ПАЛАТА
г. Чебоксары Чувашской АССР

Пирĕн аттен ҫич ывăл,
Ҫичҫĕр ҫăхан сулăхсан,—
Ҫичĕ авăк хушшинче
Пĕтĕ сичĕҫĕр ҫăхан.

Пирĕн аннен ҫичĕ хĕр,
Курăнсассăн ҫичĕ ют,—
Ҫичĕ юта ҫунтарма
Ҫиҫĕ ҫичĕ парашют.

Пирĕн аттен ҫич ывăл,
Ҫиччĕшĕ те пит хастар:
Нихҫан шывра путас ҫук,
Нихҫан вутра ҫунас ҫук.

Пирĕн аннен ҫичĕ хĕр,
Ҫиччĕшĕ те пит хастар:
Нихҫан ята ярас ҫук,
Нихҫан намăс курас ҫук.

---

## ХЁР ЮРРИ

Ӑсанчӗ комбайнер-савниҫӗм
Хӗрӳллӗ те вутлӑ вӑрҫа.
Вӑл ҫапӑҫӗ ирӗк ҫӗршывшӑн,
Кунҫулшӑн та ман юратушӑн,—
Чап илӗ хастар ҫапӑҫса.

Комбайнер-савни вӑрҫӑра халь
Тытать хурҫӑ танкӑн рульне.
Шанатӑп: ман тусӑм-савниҫӗм
Тӑшманшӑн пулать аҫа-ҫиҫӗм,—
Ҫунтарӗ фашист ордине.

Савниҫӗм фронтра... эпӗ хам та
Ӑнлантӑм таса тивӗҫе:
Савни тракторне алла тытрӑм,
Сар тулӑ уйне унпа тухрӑм,—
Эп кӗтӗм хӗрӳллӗ ӗҫе.

Сар тулӑ вырма эпӗ тухрӑм,
Упратӑп кашни пӗрчӗне.
Ман алӑ пуҫтарнӑ тырпулӑ

Тăхлан пулса çутăрччĕ тетĕп
Тăшманăн ĕнсийĕ çине.

Савниçĕм—фронтра, уйхирте—эп;
Анчах, ĕçсем пирĕн—пĕрре.
Фронтра та эпир, уйхирте те
Çĕршывшăн хастар кĕрешетпĕр,—
Никам çĕнтереймĕ пире!

—

## ПАТТĂР ХĔРЛĔ ÇАР

Пирĕн ирĕклĕ, хаваслӑ,
Тулăх пурнăçа
Куç шăрçи пекех сыхлать вăл,
Паттăр Хĕрлĕ Çар.

Урăм-сурăм тăвăл витĕр
Пĕр хутчен çеç мар—
Çĕнтерӳллĕн тухнă пирĕн
Паттăр Хĕрлĕ Çар.

Хурçă алсемпе çĕкленӗ
Хĕрлĕ ялава
Ӳкермен çĕре нихçан та,—
Тухнă мухтава!

Паян кун та астăваççĕ:
Перекоп, Чонгар...
Тăшмана хирĕç хастаррăн
Тăнă эпир кар!

Аслă Ленин, аслă Сталин
Пирĕн ĕмĕте

Хӗрлӗ ҫăлтăрпа ҫӗклерӗҫ
Ҫӗнӗ ӗмӗрте.

Вӗсен ячӗпе хӗрӳллӗн,
Пӗр хутчен ҫеҫ мар—
Тăшмана ҫапать хăватлăн
Паттăр Хӗрлӗ Ҫар.

Ак, каллех тискер фашизм
Килчӗ тулхăрса...
Тӗп туса ăна аркатӗ
Паттăр Хӗрлӗ Ҫар.

Хурҫă алсемпе ҫӗкленӗ
Хӗрлӗ ялава
Ҫӗнтерӳллӗн варкăштарӗ,
Тухӗ мухтава!

—

## ТУПМАЛЛИ


| | *Стр.* |
|---|---|
| Ҫĕнтерӳ ялавĕ . . . . . . . . . . . . . . . | 3 |
| Сталин—аслă командир . . . . . . . . . . . . | 5 |
| Кар ҫĕклен, халăх . . . . . . . . . . . . . . | 7 |
| Тимошенко ҫинчен хунă юрă . . . . . . . . . | 10 |
| Комсомол юрри . . . . . . . . . . . . . . . | 11 |
| Ҫĕнтерӳ юрри . . . . . . . . . . . . . . . | 13 |
| Нимĕҫ ĕҫхалăхне . . . . . . . . . . . . . . | 14 |
| Пирĕн аттен ҫич ывăл . . . . . . . . . . . . | 17 |
| Хĕр юрри . . . . . . . . . . . . . . . . . | 19 |
| Паттăр Хĕрлĕ Ҫар . . . . . . . . . . . . . . | 21 |

Редактор А. ЭСХЕЛЬ.

Под. к печ. 13/IX-41 г.
НТ 6513 Об'ем 0,75 п. л.
Тир 1600 экз. Зак. № 440.

г. Чебоксары, тип. № 1
Управл. издательств и
полиграфии при СНК
ЧАССР.

ЧУВАШСКАЯ
КНИЖНАЯ ПАЛАТА
г. Чебоксары Чувашской АССР

1 отк.

Цена 75 коп.

МАКСИМ ЯСТРАН

# ЗНАМЯ ПОБЕДЫ

Стихи

Госиздат ЧАССР
1941